28-мĕш çул тухăть. Хакĕ 20 пус.

1945
МАЙ
8
ЫТЛАРИКУН
87(6838) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, кĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Хăвăртрах та лайăхрах акар

Çуракин татăклă кунĕсем çитрĕç. Кĕркунне мĕн чухлĕ тырпул пухса илесси нумай енчен шăп çак кунсенче хирти ĕççене хăвăртрах та лайăхрах туса ирттерниччен килет. Пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисенче вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе пысăк опыт туянчĕç. Практика çакна кăтартать: тырпула вăхăтра акни вăйлă тырпул туса илмелли чи кирлĕ условисенчен пĕри пулса тăрать. Тырра мĕньле срокра акнин пĕлтерĕшĕ кăçал пĕлтĕрхинчен пысăкрах пулать. Çакна шута илмелле: пĕлтĕр кĕркунне çумăр сахал çурĕ, кăçалхи çуркунне типĕ тăрать, нумай пĕтсе пырать. Нумай тăпрара сыхласа хăварма тăрăшмалла. Çавăнпа та хăвăртрах акмалла тата калрах акмалли культурăсен участокĕсене лущильникпе тата сӳрепе сӳрелесе нумай сыхласа хăвармалла.

Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем, паттăр Хĕрлĕ Çăран аслă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, хăйсен вăйне шеллемесĕр тата вăхăта пăхмасăр ĕçлеççĕ. Çуркунне кая юлса килчĕ пулин те, ир акакан тĕштырăсемпе пĕр сул ӳсекен куракене чылай колхозсем акса пĕтернĕ те ĕнтĕ. Вăрнар районĕпе Шăхасан районĕнчи колхозсем çуркунне акмалли пĕтĕм хирĕн 50 процентне яхăн акнă. Çуракине çитес кунсенчех ăнăçлăн пĕтерме пур районсенче те кирлĕ условисем пур. Республикăра пур çĕрте те вăрлăх çителĕклĕ. Лашасем пĕлтĕрхинчен лайăхрах. Колхозсем кăçал выльăх апачĕ çитмест тесе калама пултараймаççĕ. МТС-сен тракторĕсене пурне те çуракине тухма хатĕрлесе хунă. Çаксене шута илсе, ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ майăн 5-мĕшĕпе 15-мĕшĕ хушшинче ир акмалли тĕштырăсемпе пĕр сул ӳсекен куракене акса пĕтермелли вунăкунлăх ирттерме йышăнчĕ. Çак задачăна пирĕн республикăри кашни колхозах пурнăçлама пултарать. Ăна пурнăçламашкăн район руководителĕсемпе колхоз председателĕсен ĕçе тĕрĕс организацилени тата фронтри пек ĕçлени çеç кирлĕ.

Хирти ĕççене организацилес ĕçре вырăнти парти, совет тата çĕрĕç органĕсем, çавăн пекех тата колхозсен председателĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Çуракине чи лайăх вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттерес тĕлĕшпе колхозниксемпе трактористсем хушшинче сарăлса кайнă ăмăртăва ертсе пымалла. Ĕç хăй тĕлĕн пулса пырасса шанассине хирĕç, дисциплинăсăрлăха хирĕç, лăпланса ларнине хирĕç вăйлă кĕрешмелле. Тĕштырăсемпе пĕр сул ӳсекен куракене ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ кăтартса панă сроксенче акса пĕтересси çав органсем ĕçе пĕлсе ертсе пынинчен килет.

Анчах çакна палăртмалла: чылай районсен руководителĕсем çуракине вăхăтра та лайăх ирттерессишĕн хăйсем ответлă пулса тăнине халĕ те туйса илмен-ха. Кăçал Ишлей, Йĕпреç, Октябрьски, Первомайски, Çĕмĕрле, Улатăр тата Кувакино районĕсем кая тăрса юлнине çакăнпа çеç ăнлантарса пама пулать. Çав районсем майăн 5-мĕшĕ тĕлне çурхи тырăсем акмалли лаптăкăн 9—18 процентне çеç акнă. Çуракине çакăн пек хăвăртлăхпа туса пыни тĕштырăсемпе пĕр сул ӳсекен куракене акса пĕтермелли фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăха пăсма, çуракине вăраха яма, çапла вара тырпул тухăçне чакарма пултарать.

Çак районсем çуракинче питĕ кая юлни—районри чылай работниксемпе колхоз председателĕсем ытла та йĕркерен тухса кайнинчен, дисциплина питĕ сӳрĕк пулнинчен, районри руководительсем çав çитменлĕхсемпе килĕшсе ларнинчен килет.

Ишлей районĕ кая тăрса юлнипе каçарма çук. Майăн 5-мĕшĕнче унта районри мĕнпур колхозсем 800 гектар акма пур çĕртех 331 гектар çеç акнă. Райком секретарĕнчен Пидуганов юлташран ыйтас килет: çураки ĕçĕсене васкатма халь мĕскер кансĕрлет-ши? Малтанхи кунсенче унта тăпра нумай тесе тăратчĕç. Халь? Халь ĕнтĕ тăпра нумай тесе никам та калама пултараймасть. Халĕ тăпра ытлашши типет. Кая юлнин сăлтавĕ унта пĕрре кăна—тырпул ытларах туса илессишĕн пăшăрханманни. Партипе совет активне, коммунистсемпе комсомолецсене унта вăйлă тырпул туса илес ĕçе мобилизацилемен.

Çавăн пекех Кувакино районĕнчи МТС-семпе колхозсем çуракине чăтма çук япăх ирттереççĕ. Кунта майăн 5-мĕшĕ тĕлне 18 процент çеç акнă. ВКП(б) райкомĕпе райисполком МТС ĕçĕсене çителĕклĕ ертсе пымаççĕ, пĕлтĕрхи пекех, кунта тракторсем ытларах ĕçлемесĕр тăраççĕ, вĕсен тухăçлăхĕ питĕ пĕчĕккĕ. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене техника тĕлĕшĕнчен типтерлĕ пăхса усрассине организацилемен, çакăн пирки ĕнтĕ вĕсем час-часах ванса каяççĕ, вăхăтсăр пĕтеççĕ, ĕçлемесĕр тăраççĕ.

Хальхи вăхăтра тракторсем нихăш районра та Кувакино районĕнчи чухлĕ çук. Икĕ МТС-ра унта 96 трактор. Горючи вĕсен çуракине ирттерме çителĕклех. Республикăри малта пыракан колхозсем Кувакино районĕнчи кайра пыракан колхозсене темиçе пин центнер вăрлăх парса пулăшрĕç. Çав калама çук пысăк пулăшупа унта халь чăтма çук начар усă курараççĕ. 15 лаша вăйлĕ пĕр трактор пуçне майăн 5-мĕшĕ тĕлне 8 гектар çĕç сухаланă, çав вăхăтрах Красноармейски районра 35 гектар, Вăрнар районĕнче 30 гектар сухаланă.

Пĕлтĕр Чкаловски, Шăмăршă районĕсенчи чылай колхозсем çурхи тырăсене кая юлса акнă пирки тата калчасене начар пăхнă пирки тырă сахал пухса илнĕччĕ. Кăçалхи çуракин малтанхи кунĕсем çакна кăтартса параççĕ: çав районсен руководителĕсем пĕлтĕрхи урока шута илнĕ. Чкаловски район паянхи кун тĕлне пĕтĕм акмалли çĕрĕн 34 процентне, Шăмăршă районĕ—28,8 процентне акнă. Ĕлĕкрех кая юлса пынă çав районсенче ĕç вылăхĕ тата ытти хатĕрсем Ишлей, Улатăр, Йĕпреç районĕсенчен ытларах мар, сахалтарах. Çак районсем çуркуннехи хирти ĕççене халĕ те питĕ ерипен туса пыраççĕ-ха.

Хальхи вăхăт çураки ĕçĕсене питĕ хытă хăвăртлатма хушать. Çакна тумашкăн, чи малтан, хирте колхозниксен ĕçне тĕрĕс организацилемелле, уйрăм сдельщинăна чăннипе пурнăçа кĕртмелле. МТС-сен мĕнпур тракторĕсемпе, колхозсен ĕç вылăхĕпе вĕçне çитиченех усă курмалла, колхозсемпе колхозниксен майракаллă шултăра вылăхсене хирти ĕççене ытларах хутшăнтармалла. Мĕнпур агрономсем тата колхоз председателĕсем пурте çуланах хирте пулмалла, хирти ĕççене тивĕçлипе ертсе пымалла. Парти райкомĕсемпе райисполкомсен уполномоченнайĕсене колхозсенче хирти ĕççене мĕнле организациленишĕн вĕсем паргипе государство умĕнче ответлă пулнине ăнлантарса парса, вĕсенчен çаван пек ответлăх ыйтмалла. Çак татăклă вăхăтра лапланса ларни государствăна, колхоза тата колхозниксене нимĕнпе саплайми сиен кӳме пултарать.

Вăйлă тырпул туса илес тесен, хăвăрт акни çеç çитмест, тырра тата лайăх, тĕплĕн акмалла—çĕре лайăх сухаламалла, вăрлăха лайăх варса пымалла, вăрлăх акмалли нормăсене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пымалла. Тăвай районĕнче «1-ое Мая» тата «Коммунар» колхозсенче малтанхи кунсенче хăмăл çине акнă. Çавăн пек тума юрамасть, агротехникăна çавăн пек пăсакансене ответ тыттарас пулать. Этĕр, Ишлей, Сĕнтĕрвăрри районĕсенче сеялкăсемпе начар усă курараççĕ. Çав районсенче тата хăшĕпĕр ытти районсенче те, суйласа илсе акатпăр тесе, халĕ те алăна акаççĕ-ха. Пур сеялкăсемпе те тулли усă курмалла. Тĕштырăсене акса пĕтернĕ колхозсен, каласса татăлса, хăйсен сеялкисене ытти колхозсене памалла.

Пирĕн республика хăй 25 çул тултарнине уявласа ирттерес умĕн ĕçлет. Çав чаплă куна колхозниксемпе колхозницăсем çуракине ăнăçлăн ирттернипе, çум çумлас ĕçе кăтартуллăн организациленипе кĕтсе илме тăрăшаççĕ. Хамăран орденлă республика 25 çул тултарнă ятпа вăйлă тырпул туса илессишĕн пыракан ăмăртăва тата аниăрах сарса ярар.

Çĕнĕрен 176.000 студент

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх, 1945—46-мĕш вĕренӳ çулĕнче пирĕн çĕршыври аслă шкулсене çĕнĕрен 176.000 студент илеççĕ.

Аслă шкул комитечĕ аслă шкулсене вĕренме илес тĕлĕшпе хатĕрленме хушнă. Аслă шкулсенче октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ. Аслă шкулсемпе техникумсен директорĕсене йышăну тата испытани комиссийĕсене вăхăтра туса хума, мĕнле професси суйласа илесси çинчен вăтам шкулсенчен вĕренсе тухакансемпе каласусем ирттерме, вĕренме кĕрекенсем валли тĕп дисциплинăсем тăрăх консультацисем организацилеме хушнă. Малтан аслă шкулсенче тата техникумсенче вĕреннĕ çынсене пĕрремĕш курса экзаменсăр илмеççĕ. Хĕрлĕ Çартан е Тинĕс-Çар Флотĕнчен демобилизаци йĕркипе тавăрăннă студентсене çеç пĕрремĕш курса испытанисĕр илеççĕ.

Вĕренмелли çуртсене тата студентсен общежитийĕсене сентябрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр юсаса тата йĕркелесе çитермелле. (ТАСС).

Сталин юлташăн 1945 çулхи Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе панă приказне уйрăм кĕнеке туса кăларнă

Политика литературин государство издательстви Верховный Главнокомандующин Совет Союзĕн Маршалĕн И. Сталинăн 1945 çулхи майăн 1-мĕшĕ ячĕпе панă приказне уйрăм кĕнеке туса кăларнă.

Пĕтĕмпе 5 миллион кĕнеке пичетлесе кăларнă. (ТАСС).

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне КОНЕВА

Фронт штабĕн начальникне
Арми генералне ПЕТРОВА

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронтăн çарĕсем, нумайччен хупăрласа тăнă хыççăн, паян, майăн 7-мĕшĕнче, БРЕСЛАВЛЬ (БРЕСЛАУ) хулипе крепоçне туртса илнĕ.

Нимĕç çарĕсен хулана хӳтĕлекĕ гарнизонĕ крепость комендантĕпе инфантери генералĕ фон НИГОФПА тата унăн штабĕпе пĕрле, хирĕç тăма пăрахса, хĕçпăшала пăрахса тытăна парăннă.

Майăн 7-мĕшĕнче, 19 сехет тĕлне, пирĕн çарсем БРЕСЛАВЛЬ хулинче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 40.000 çын ытла тытăна илнĕ.

БРЕСЛАВЛЕ туртса илессишĕн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: ГЛУЗДОВСКИЙ генерал-лейтенантăн, КУЛИШЕВ генерал-майорăн, ЗАХАРОВ генерал-майорăн, ВОРОЖИШЕВ генерал-майорăн, РОМАШИН генерал-майорăн, СИНЬКИН полковникăн, КОСОЛАПОВ полковникăн, ЕРОШЕНКО полковникăн, ЛЕВ полковникăн, МОРОЗОВ полковникăн, ЖУКОВ полковникăн, КОРОЛЕНКО полковникăн, БАРБАСОВ полковникăн çарĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенантĕнчен КОРЧАГИНĂН, БАБКОВСКИЙ полковникăн, СМИРНОВ полковникăн, ТИДЕМАН полковникăн, МАКАРОВ подполковникăн, ШИШОВ подполковникăн танки счĕсем; артиллери генерал-майорĕн КВАШНЕВСКИН, артиллери генерал-майорĕн КРАСНОКУТСКИН, КОЗЛОВ полковникăн, ДМИТРИЕВ полковникăн, ФЕДОТОВ полковникăн, СВЕТ полковникăн, ВОРОБЬЕВ полковникăн, ОЛЕЙНИКОВ подполковникăн, ЛАНГЕР подполковникăн, КУЗНЕЦОВ майорăн, МЫШКОВ подполковникăн, ХОЛЬК подполковникăн, ШАНКИН подполковникăн, МЕДВЕДЕВ подполковникăн, ВИЛЬКЕР капитанăн, СЕМИКОСОВ капитанăн артиллерисчĕсем; авиаци генерал-майорĕн АРХАНГЕЛЬСКИН, авиаци генерал-майорĕн МАЧИНĂН, НИКИШИН полковникăн, ДОБЫШ полковникăн, ГРИБАКИН полковникăн, АНИСИМОВ полковникăн, НОГА полковникăн, КОЖЕМЯКИН полковникăн, ЧУМАЧЕНКО полковникăн, ЮЗЕЕВ полковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн ТИМОФЕЕВĂН, техникăллă çарсен генерал-майорĕн ВЕРШИНИНĂН, ПУХТИН полковникăн, БОНДАРЕВ полковникăн, ГАПЕЕВ подполковникăн, СУХИХ подполковникăн, АРТЕЕВ подполковникăн, КУЧЕРЕНКО майорăн, СКИБИНСКИЙ майорăн, ГОРОЖАНКИН майорăн, НЕХУРОВ инженер-майорăн саперĕсем; ДЕНИСЕНКО полковникăн, КАЛИНИЧЕНКО подполковникăн, БУШЕЕВ майорăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, БРЕСЛАВЛЬ хулипе крепоçне туртса илесшĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе частьсене орденсемпе наградалама тăратас.

Паян, майăн 7-мĕшĕнче, 22 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, инçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Украинăри 1-мĕш фронтăн çарĕсене, БРЕСЛАВЛЕ туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, БРЕСЛАВЛЕ туртса илесшĕн çапăçнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТАВАТАП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе ни кама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухатв!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ **И. СТАЛИН.**

1945 çулхи майăн 7-мĕшĕ. № 364.

Совет Информаци Бюровĕнчен

КАЙĂН 5-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Майăн 5-мĕшĕнче БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем тăшмантан ФРИШ НЕРУНГ сăмсахне тасатасшăн çапăçнă, ЛАНГХАКЕН, ШЕЛЛМЮЛЬ, ШМИРГЕЛЬ, ПРЕББЕРНАУ, ШОТЛАНД ялĕсене туртса илнĕ.

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем майăн 5-мĕшĕнче СВИНЕМЮНДЕ хулине—пысăк порта тата нимĕçсен Балтика тинĕсĕнчи тинĕс-çар базине—туртса илнĕ, çаван пекех тата ВОЛЛИН утравĕпе УЗЕДОМ утравне тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатнă, КОЛЬЦОВ, МИСДРОВ, ЛЕББИН, АЛЬБЕК, ЗЕЕБАД, ГЕЛИНГСДОРФ, УЗЕДОМ, КЕЛПИНЗЕЕ, ЦИННОВИТЦ, ПЕЕНЕМУНДЕ ятлă пысăк ялсене йышăннă.

Майăн 4-мĕшĕнче фронт çарĕсем 11.700 нимĕç салтакĕпе офицерне тытăна илнĕ тата çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: самолетсем—55, танксем—24, хир тупписем—88.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем БРАНДЕНБУРГ хулинчен кăнтăр-хĕвелăнăçнерехре малалла кусса пынă, ЦИЗАР, ЛЮБУРГ, БУРГ, ЛЕККЕРН, ГОММЕРН, РОСЛАУ хулисене туртса илнĕ. Майăн 4-мĕшĕнче фронт çарĕсем 2.860 нимĕç салтакĕпе офицерне тытăна илнĕ.

УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем МОРАВСКАЯ ОСТРАВА хулинчен кăнтăр-хĕвелăнăçнерехре тата кăнтăртарахра малалла тапăнса пынă. ХОФ (ДВОРЦЕ), БЕРН (МОР ДЕРОУН), ФУЛЬНЕК, МИСТЕК хулисене тата МЕЛЬЧ, РАУЧ, ШТАДТ ЛИБАУ, БАРТОШОЛИЦЕ, МЕТИЛОВИЦЕ, ФРИДЛАНДТ, КУНЧИЦЕ РОЖНОВ ятлă пысăк ялсене çапăçса туртса илнĕ.

Майăн 4-мĕшĕнче фронт çарĕсем 1.100 нимĕç салтакĕпе офицерне тытăна илнĕ.

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем БРНО хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре малалла тапăнса пынă. КРОМЕРЖИЖ хулине туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Майăн 4-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 26 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине пĕтерсе тăкнă. Сывлăшпи çапăç усенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 14 самолетне персе ӳкернĕ.

МАЙĂН 6-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, малалла тапăнса пырса, ШТРАЛЬЗУНДЕРФАРВАССЕР проливĕ урлă каснă та РЮГЕН утравĕ çинче БЕРГЕН, ГАРЦ, ПУТБУС, ЗАССНИТЦ хулисене туртса илнĕ, вара майăн 6-мĕшĕнче РЮГЕН утравне пĕтĕмĕшпех йышăннă. Майăн 5-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем 4.660 нимĕç салтакĕпе офицерне тытăна илнĕ тата 24 самолетпа 215 хир туппи тытса илнĕ. Тытăна илнисем хушшинче—Штеттин çар округĕн мобилизаци отделĕн начальникĕ ХОРСТМАН контрадмирал.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем БРАНДЕНБУРГ хулинчен çурçĕр-хĕвелăнăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре малалла кусса пынă, ЗАНДАЛ, ВУЛЬКАУ, КЛИТЦ, ФЕРХЕЛЬ, ФИРИТЦ, ШЛАГЕНТИН, ПЛАУГЕ, ГРОСС-ВУСТРЕРВИЛЦ, КАДЕ, КАРОВ ятлă пысăк ялсене туртса илнĕ. Майăн 5-мĕшĕнче фронт çарĕсем 17.120 нимĕç салтакĕпе офицерне тытăна илнĕ тата 119 самолетпа 235 хир туппи тытса илнĕ.

УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем, МОРАВСКАЯ ОСТРАВА хулинчен хĕвелăнăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре малалла тапăнса пынă. БЕНИШ, ШТЕРНБЕРГ, ПРЖИБОР, НОВЫЙ ЙЕЧИН, ФРЕНШТАДТ, ВАЛАШ МЕЖИРИЧИ, ГОЛЕШОВ хулисене çапăçса туртса илнĕ. Майăн 5-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем 1.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тытăна илнĕ.

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем БРНО хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре КОЕТИН хулине тата ФРИШТАН, МАРТИНИЦЕ, ГУЛИН ятлă пысăк ялсене туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

☆ ☆ ☆

ХĔРЛĔ ЯЛАВЛĂ БАЛТИКА ФЛОЧĔН АВИАЦИЙĔ ТĂШМАН КАРАПĔСЕМПЕ ТРАНСПОРЧĔСЕНЕ ПЫРСА ÇАПНИ

Майăн 3-мĕшĕпе 4-мĕшĕнче Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ Балтика тинĕсĕнче Свинемюнде хулинчен çурçĕрterехре нимĕç карапĕсемпе транспорчĕсене пыра-пыра çапнă. Çапла пырса çапнипе, вĕренмелли «Шлезиен» ятлă линкора, 13.600 тонна таяканскерне тата пилĕк транспорта, пĕтĕмĕшле 24.500 тонна таяканскерсене, шыва путарнă.

Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне çырăнса илер, Тăван çĕршыв вăй-хăватне татах та ӳстерер!

Республикăра заем сарас ĕç мĕнле пыни

Çĕнĕ заема майăн 8-мĕш тĕлне пурĕ 132.812.000 тенкĕлĕх сарнă, унçине 34.601.000 тенкĕ пухнă.

Заем сарас тĕлĕшпе Канашпа Шупашкар хулисем, Красноармейски, Вăрнар, Елчĕк, Муркаш, Калинино, Çĕрпӳ районĕсем малта пыраççĕ.

Заем унçине пухас тĕлĕшпе Вăрмар, Куславкка, Муркаш, Чурачăк районĕсем малти вырăна тухрĕç.

Ишлей районĕнче рабочисемпе служащисем хушшинче бюджетпа палăртнинчен 54,3 процентчĕ, Улатăр районĕнче—76,8 процентчĕ, Советски районра—75 процентчĕ, Первомайски районра—81,4 процентчĕ, Пăрачкав районĕнче—83,6 процентчĕ, Кувакино районĕнче—86,8 процентчĕ, Элĕк районĕнче — 87,6 процентчĕ чухлĕ сарнă.

Заем унçине пухас ĕç Сĕнтĕрвăрри, Октябрьски, Çĕрпӳ, Шупашкар, Йĕпреç, Первомайски, Шăмăршă, Элĕк, Улатăр районĕсенче начăр пырать.

Партипе совет, комсомол, профсоюз организацийĕсен заема сарас тĕлĕшпе ĕçлессине вăйлатмалла, пур рабочисемпе колхозниксене тата служащисене заем сырăнтарнипе пĕрлех, заемшăн колхозниксемпе единоличниксенчен унçа хăвăртрах пухса пĕтересшĕн кĕрешмеляле.

Халăхăн хăватлă пулăшăвĕ

ВĂРМАР, майăн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсенче, предприятисемпе учрежденисенче Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне вырнаçтарас ĕç хĕрӳлĕн пырать. Паянхи кун тĕлне çĕнĕ заема районĕпе пурĕ 5.906.000 тенкĕлĕх вырнаçтарнă. Вăл шутран колхозниксем 4.726.000 тенкĕлĕх, рабочисемпе служащисем 580.000 тенкĕлĕх тата колхозсем 700.000 тенкĕлĕх сырăннă.

Колхозсемпе колхозниксем заем унçине çиĕнчех тӳлеме тăрăшаççĕ. «Красная Кубня» колхозра заема 255.000 тенкĕлĕх сарса, унçине малтанхи кунах тӳлесе татнă. Çавăн пекех заем унçине «Новая жизнь» колхоз 120.570 тенкĕ, «Смычка» колхоз—100.500 тенкĕ, «Заря» колхоз—45.000 тенкĕ тӳлĕнĕ, вĕсем заем унçине сырăннă чухлех пухса панă. Районĕпе пурĕ 3.173.000 тенкĕ пухса перекет кассине хывнă.

Ялти активистсем çĕнĕ заема нумай сырăнаççĕ. «Красная Кубня» колхоз председателĕ Сапаркин, «Красная Шептахи» колхоз председателĕ Васильев юлташсем 3 пиншер тенкĕлĕх сырăннă. Вĕсем унçине те çиĕнчех панă.

А. СМИРНОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Укçа пухасси юлса пырать

СĔНТĔРВĂРРИ, майăн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). Район кăçал заем кампанине çителĕксĕр хатĕрленсе кĕтсе илчĕ. Çавăн пирки заем унçине пухасси чылай юлса пырать. Майăн 7-мĕшĕ тĕлне районĕпе 4.900.000 тенкĕлĕх сырăннă пулсан, унçине 868 пин тенкĕ çеç пухнă.

Халĕ, заем кампанине кĕрсен, хатĕрленӳ ĕçĕнче пулнă чылай çитменлĕхсем куç умпе тухса тăчĕç. Тĕслĕхрен, Амачкинăри «Красная звезда» колхозра заема ку тарифпа 9.200 тенкĕлĕх çеç сарнă. Мĕншĕн апла-ха? Кунта заем сырăнас ыйтупа колхозниксен пухăвне те пухман. Колхоз председателĕ Чернов юлташ иртнĕ çулхи заем унçине те тӳлесе татман, çавăнпа колхозниксем умĕнче каласма паллах, вăтаннă. Çапла вара, çĕнĕ заема сырăнас ĕçе колхозра 9 çынна кăна явăçтарнă. Кунти парторганизаци секретарĕ Лукоянов юлташ çакна курса тăрать пулин те, ĕçе тӳрлетес тесе нимĕнех те тумасть. Совет заемĕн пĕлтерĕшĕпе усси çинчен колхозниксене ăнлантарса памаççĕ, стена хаçачĕ кăлармаççĕ. Налог агенчĕ Маслова юлташ та хăйĕн тивĕçĕ çинчен маннă. Заем унçине пухас ĕçе активлăн хутшăнас вырăнне, вăл унтан пăрăнса çӳрет. Çĕнĕ заем унçине «Красная звезда» колхозра пĕр пус та пухманни çавăнтан килет те ĕнтĕ.

Юнашарти «Красный волгарь» колхозра та заем сарас ĕçе начар тытăннă. Райфо заведующийĕн заместителĕ Трещенков юлташ, çак колхозра уполномоченнăй пулса ĕçлемеллескер, район центрĕнчен тухмасăр ларать. Колхозра вара заем сарас ĕç хăй тĕллĕн пулса пырать.

Ленин ячĕпе тăракан, «Красноармеец» колхозсенче те заем сарас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Ку колхозсенче колхозниксене пухса, вĕсене заем çинчен ăнлантарса паман.

Район руководителĕсен заем сарас ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

Ф. ИЛЬИН.

Заем сарнин хроники

Республикăри предприятисемпе колхозсенче, промартельсемпе учрежденисенче Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заема сырăнас ĕç анлăн пырать. Рабочисемпе работницăсем, колхозниксемпе колхозницăсем тата служащисем, вăрçă пирĕн çĕнтерӳпе вĕçленнине курса, çĕнĕ заема хавасланса сырăнаççĕ, хăйсен перекетленĕ унçине государствăна кивçен параççĕ.

* * *

Шупашкарти Якунин юлташ главнăй инженер пулса тăракан заводра ĕçлекенсем çĕнтерӳ заемне пурте пекех сырăннă. Кунти рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем заема сырăннин суммипе вĕсен уйăхри ĕçукçи фончĕн 140 процентĕнчен иртет. Чылайăшĕ ик-виçĕ уйăх ĕç укçи чухлĕ сырăнма кăмăл тунă. Тĕслĕхрен, слесарь Лукина, намотчица Федорова, прессовщица Панфилова уйăхри ĕçукçин 230 процентчĕ чухлĕ сырăннă. Инструментальнăй цехри слесарь Офицеров, лекальщик Хельсинг 5-шер пин тенкĕлĕх сырăнса, ытти рабочисене пример кăтартнă.

* * *

Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра заема пĕтĕмĕшпе илсен, уйăхри ĕç укçи фончĕн 137 процентĕ чухлĕ сарнă. Заем кăларасси çинчен пĕлтернĕ хыççăнах Иванов юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри рабочисем пурте заем сырăннă. Рабочи Кириллин юлташ уйăхри ĕçукçин 300 процентчĕ, Богачевпа Жеребков—200 процентчĕ чухлĕ сырăннă.

Л. ШУННИКОВА.

* * *

ÇĔМĔРЛЕ. Хулари предприятисемпе учрежденисенче заема бюджетпа палăртнă чухлех, е 2.700.000 тенкĕлĕх сарнă. Уйрăмах комбинатри, «Большевик» заводри рабочисемпе служащисем заема нумай сырăннă.

* * *

ТĂВАЙ. Ялти активистсем çĕнĕ заема пысăк суммăлăх сырăнаççĕ. Ленин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Григорьев юлташ—10.000 тенкĕлĕх, «Мартăн 8-мĕшĕ» колхоз председателĕ Евдокимов юлташ—8.500 тенкĕлĕх, çак колхозри бригадирсем Кирилловпа Сидорова юлташсем 5-шер пин тенкĕлĕх сырăннă. Вĕсем унçине те çиĕнчех тӳлесе татнă.

З. С.

* * *

КӲКЕÇ. Мăн Карачурари çичĕ çулхи ачан, Юрий Клюковăн, пĕчĕкшерĕн пухса пынă укçа 150 тенкĕ пулнă. Государство çĕнĕ заем кăларни çинчен тата çав заем унçи хĕçпăтăлсем тунă çĕре кайни çинчен ашшĕнчен ыйтса пĕлсен, Юрий колхозниксен пухăвне пынă та хăйĕн 150 тенкипе заем сырăннă.

И. СМИРНОВ.

* * *

ВĂРНАР. Ленин орденлĕ Кольцовка колхозникĕсем правительство Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне кăларасси çинчен радиопа пĕлтерсенех митинга пухăннă. Вĕсем, çĕнтерӳ заемне кăларнине ырласа, ăна çавăнтах сырăнма тытăнна. Чи малтан колхоз председателĕ Васянин юлташ заема 4.000 тенкĕлĕх сырăнса ытти-сене пример кăтартнă. Ун хыççăн Фролова, Елизаров, Пупина, Миронова колхозницăсем тата Прошкин колхозник 2-шер пин тенкĕлĕх сырăннă.

Колхозра малтанхи кунах 210.000 тенкĕлĕх сырăнса, унçине 154.000 тенкĕ пухса панă.

Шупашкар хулинчи парти, совет тата профсоюз активĕн пичет кунĕ ячĕпе пулса иртнĕ пухăвĕ

Майăн 5-мĕшĕнче Пионерсен çуртĕнче большевикла пичет кунĕ ячĕпе парти, совет, профсоюз активĕн тата пичет работникĕсен пухăвĕ пулса иртнĕ.

Пуху «Красная Чувашия» хаçат редакторĕн Карташов юлташăн «Майăн 5-мĕшĕ—большевикла пичет кунĕ» ятлă докладне итленĕ. Доклад хыççăн йышăннă резолюцире республикăри тата районри хаçатсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртнă. Республикăри «Красная Чувашия» тата «Чăваш Коммуни» хаçатсем рабселькорсемпе ĕçлессине вăйсăрлатнă, районри хаçатсене, заводсенчи многотиражкăсемпе стена хаçачĕсене питĕ сахал пулăшаççĕ.

Пуху республикăри хаçатсен редакторĕсене çав çитменлĕхсене пĕтерме хушнă.

* * *

Пухура пулнисем валли пĕр заводăн пултарулăх кружокĕ концерт лартса панă.

Майăн 5-мĕшĕ

Тĕштырăсемпе курăксене акса пĕтермелли вунăкунлăх

Майăн 15-мĕшĕ

Çуракине ăнăçлăн ирттерсе, çĕнтерӳ тырпулĕн никĕсне хывса хăварар

Ĕççынни депутачĕсен Елчĕк райсовечĕн исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ тăратнă тăрăх, çуракинче тухăçлăн та лайăх ĕçленĕшĕн çак колхозсене республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

1. Ворошилов ячĕпе тăранан колхоз (колхоз председателĕ В. В. Зайцев юлташ). Çак колхоз 416 гектар тĕштырра 9 кун хушшинче акса пĕтернĕ, ăна агротехника правилисене тĕплĕн пурнăçласа акнă. Тĕштырăсен пĕтĕм лаптăкне яровизациленĕ тата тасатнă вăрлăх акнă, вăрлăха ретĕн-ретĕн акнă.

2. Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялавĕ ячĕ «Ново-Ищеряково» колхоз (председателĕ В. Е. Егоров юлташ). Колхоз 86 гектар тĕштырра 8 кун хушшинче тата пысăк пахалăхпа акса пĕтернĕ. Тĕштырăсен пĕтĕм лаптăкне яровизациленĕ тата тасатнă вăрлăх акнă, вăрлăха ретĕн-ретĕн акнă.

Тĕштырăсене 6 кун хушшинче акса пĕтернĕ

ÇĔРПУ, майăн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). «Балтиец» колхоз (председателĕ Васильев юлташ) пĕрчĕллĕ тырăсемпе пĕр çул ӳсекен куракене план тăрăх 8 кун акма палăртнăччĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем ăмăртса ĕçленине пула, колхоз пĕрчĕллĕ тырăсене 6 кун хушшинче акса пĕтернĕ. Кунта кашни сухаçăна уйăм участок уйăрса панă. Сухаçăсемпе сӳрекенсем лашасене уйрах çитереççĕ, час-час кĕске вăхăтлăха кантарса илеççĕ. Селякăсемпе тулли усă кураççĕ. Тимофеева, Константинова, Федорова сухаçсем куллен нормăна кашни кунах 110—130 процент тултарса ĕçлеççĕ.

«Дружба» колхозра майракалла шултăра вильăхсемпе анлăн усă кураççĕ. Кунта та кашни сухаçах уйăм участок уйăрса панă. Вăкăрпа ĕçлекен М. Шаров кашни кунах 0,35—0,40 гектар сухалать.

Анчах та районра çуракине тăсса пынă тĕслĕхсем те нумай-ха. Уйрăмăнах «Авангард», «Молот» колхозсем юлса пыраççĕ. Çак колхозсенче уйрăм сдельщинăпа ĕçлемеççĕ. Ирхине кая юлса тухаççĕ, хиртен ир тавăрăнаççĕ. «Молот» колхозра агротехникăна пăсаççĕ. Селька пур пулни те, 15 гектар тулла алăпа акнă. «Прожектор» колхозра ăшăх сухалаççĕ. «Красный Октябрь» колхоз пурĕ 77 гектар акнă, çав вăхăтрах 56 гектарне алăпа акнă. «Прожектор» колхозра хирте ĕçлекенсем хушшинче массăллă-ăнланăруллă ĕçе туса пымаççĕ, стена хаçачĕсемпе боевой листоксем кăлармаççĕ.

А. ИВАНОВ.

Селякăсемпе усă курман çĕрте

ИШЛЕЙ. (Телефонпа). Районри нумай колхозсем çуракине ытла та начар хăвăртăхпа туса пыраççĕ. Район юлса пыни, чăн малтанах, çуракине ĕçне организацилеме пĕлменниччен килет. Акă, сăмахран, «Активист» колхоза илер. Кунта сухаçсем пушса çамрăксем ĕçлеççĕ. Вĕсем хире кая юлса тухаççĕ, нумай вăхăт канаççĕ, лашасене ĕçленĕ çĕрте çитмеççĕ; уйрăм сдельщинăпа мар, пурте пĕрле сухалаççĕ. «Активист» колхозра ĕçе вĕрентнĕ виçĕ вĕкăр пур. Анчах та вĕсемне çуракинче усă курмаççĕ. Колхоз бригадирĕсем хирте сахал пулаççĕ. Колхозри сухаçсем пĕри те нормăна тултараймаççĕ, икĕ касăллă плугпа кунне 1 гектар сухалас вырăнне 0,60—0,75 гектар çеç сухалаççĕ. Ĕç ăнăх пырать пулни те, колхоз председателĕ Иванов юлташ акана тухнăранпа та хирте пулман, «ĕлкĕрĕпĕр-ха, тракторсем килсе сухаласа парĕç», тесе лăпланса ларать.

Çавăн пекех «Прожектор» колхозра та ĕçсем начар пыраççĕ. Колхоз председателĕ Подьянов юлташ хирте сахал пулать, ытларах канцеляринче ларма юратать. Çак колхозра та нормăна тултаракан колхозниксем сахал.

Районра малта пыракан колхозсем те пур. Сыпайкасси ял Советне кĕрекен «Труд» колхоз (председателĕ Шишкин юлташ) тата «Ыраш», «Красный воин» колхозсем пахăн-ыран пĕрчĕллĕ тырăсене акса пĕтереççĕ. Кунта кашни сухаçă, кашни акакан тата сӳрекен колхозник уйрăм участокра ĕçлет. Социализмлă ăмăртăва анлăн сарнă. Куллеххи нормăна тултарайман пĕр колхозник те çук. «Ыраш» колхоз председателĕ Кульков юлташ хирте ĕçлекенсем патĕнче яланах пулать, вĕсен ĕçне ăй йĕркелесе пырать.

Районри партипе совет тата çĕрĕç органĕсенче ĕçлекенсем малта пыракан колхозсен ĕçри опытне ытти колхозсене сарма тăрăшмаççĕ. Районри çĕрĕç пайĕн агрономĕсем майăн 6-мĕшĕнче кăна колхозсене тухса кайнă. Çураки ĕçĕ куллен пулса пырать пулин те, машинăсемпе районра начар усă кураççĕ. Майăн 1-мĕшĕ тĕлне районри колхозсем 2642 гектар тырă акнă, анчах селякăсемпе пурĕ те 362 гектар кăна акнă.

6-7 кунта акса пĕтерчĕç

ШĂХАСАН, майăн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри малта пыракан «Красный партизан» колхоз (председателĕ И. Васильев) тата Чкалов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Дубровин) ĕнер пĕрчĕллĕ тырăсене акса пĕтерчĕç. Чкалов ячĕпе тăракан колхоз пĕтĕмпех машинăпа акнă, ака ĕçне 6 кунта вĕçленĕ. «Красный партизан» колхоз та 7 кунта акса пĕтернĕ. Ку колхозсенче уйрăм сдельщинăпа ĕçлеççĕ.

«Гвардеец» тата Куйбышев ячĕпе тăракан колхозсем те майăн 6-мĕшĕнче пĕрчĕллĕ тырăсене акса пĕтереççĕ.

В. ВЕСЕЛОВ.

Калчасене сӳрелеççĕ

Тăвай районĕнчи «Первое мая» колхоз 30 гектар, «Социализм» колхоз 10 гектар, «Красный Октябрь» колхоз 35 гектар кĕрхи калчасене сӳреленĕ. Çак ĕçе ытти колхозсенче те тăваççĕ.

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОЛХОЗСЕНЧЕ 1945 ÇУЛХИ МАЙĂН 5-мĕшĕ ТĔЛНЕ ÇУРАКИ ĔÇĔСЕМ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Пурĕ тĕштырăсем акнă	Вăл шутра пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши культурăсем тата вăрлăхлăх вика акнă	Пĕр çул ӳсекен куракене акнă	Нумай çул ӳсекен куракене акнă
Вăрнар	49,3	69,3	2,1	95,8
Чурачăк	43,5	49,5	45,1	113,5
Шăхасан	41,8	48,9	43,4	84,0
Красноар-ски	40,7	48,4	49,1	85,8
Советски	34,8	45,1	37,4	80,5
Канаш	32,2	8,4	7,9	87,3
Çĕрпӳ	31,2	36,5	54,2	74,2
Муркаш	31,0	32,9	61,7	75,3
Сĕнтĕр	30,6	27,3	93,7	102,8
Комсомольски	30,5	35,6	18,2	89,0
Чкаловски	30,3	32,9	39,4	8,2
Елчĕк	29,9	34,7	13,0	66,4
Шăмăршă	28,8	25,2	—	26,2
Етĕрне	25,7	29,7	60,0	84,8
Шупашкар	23,5	27,6	38,3	83,2
Калинино	22,2	30,8	23,5	52,7
Куславкка	21,9	26,3	26,8	91,3
Сĕнтĕрвăрри	21,1	25,1	42,9	82,5
Вăрмар	21,0	25,6	13,0	141,6
Элĕк	20,0	25,1	4,2	69,0
Пăрачкав	18,9	21,7	—	67,5
Тăвай	18,9	17,7	—	81,0
Хĕрлĕ Чутай	18,6	22,7	12,3	71,0
Кувакино	18,1	20,6	18,1	11,7
Улатăр	17,2	19,7	31,4	54,3
Çĕмĕрле	14,0	17,2	29,2	21,8
Первомайски	13,8	1,4	3,8	30,4
Октябрьски	9,6	13,2	—	86,8
Йĕпреç	9,6	2,1	—	43,7
Ишлей	9,0	1,8	1,9	105,0

РЕСПУБЛИКА ЮБИЛЕЙĔ УМĔН

ÇĔНĔ ÇУРТСЕМ ЛАРТАÇÇĔ

МУРКАШ. (Телефонпа). Чăваш халăхĕн уявне—республика 25 çул тултарнине кĕтсе илме хатĕрленнĕ май, районра çĕнĕ çуртсем лартаççĕ. Уяв тĕлне финанс пайĕн, сыхăну пайĕн, прокуратурăпа НКВД отделенийĕн çурчĕсене туса пĕтереççĕ. Радиоузел пулать.

Район пентрĕнче пысăк сад тăваççĕ. Халĕ ун тавра карта тытаççĕ. Унта 1000 тĕп йывăç лартмалла.

Ф. М.

ИНВАЛИДСЕН ПАРНИ

ИШЛЕЙ. Инвалидсен Чаканарти промысла артелĕнче ĕçлекенсем Чăваш республики 25 çул тултарнă уява ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Вĕсем, Çĕмĕрле комбиначĕн коллективĕ чĕнсе каланине сӳтсе-явса, продукци туса кăларассине 25 процент чухлĕ ӳстерме, çур çулхи ĕç планне июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне 140 процент тултарма пулчĕç.

Артель хăйĕн ĕçне уйăхран уйăха лайăхлатса пырать. Апрель уйăхĕнче ĕç планне чылай ирттерсе тултарнă. Демидов, Лазарева, Шадикова, Пучкарева стахановецсем нормăран 1,5—2 хут тухăçлăрах ĕçлеççĕ.

И. ГРИГОРЬЕВ.

НОРМАНА ИКĔ-ВИÇĔ ХУТ ИРТТЕРСЕ ТУЛТАРАКАНСЕМ

СĔНТĔРВĂРРИ. Шуркассинчи промкомбинат коллективĕ, Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, çурçулхи производство планне июнĕн 24-мĕшĕ тĕлне 120 процент тултарма, продукцин хăйне ларакан хакне 1,5 процент чухлĕ чакарма пулчĕ.

Комбинатра ĕçлекенсем халĕ çав обязательствăсене пурнăçлассишĕн кĕрешеççĕ. Ăмăртура ĕç тухăçлăхĕ ӳссех пырать. Мĕнпур работниксенчен 60 процентĕ—стахановецсем. Г. Байтураев, Н. Мородин, Г. Михайлов стахановецсем хăйсен нормисене 2—3 хут ирттерсе тултараççĕ.

И. ВАСИЛЬЕВ.

ВĂРМАН ĔÇĔНЧИ СТАХАНОВЕЦСЕМ

ЙĔПРЕÇ. Кунти вăрманпромхозра ĕçлекенсем Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа пыракан ăмăртура çĕнĕ çитĕнӳсем тăваççĕ. Дубравный вăрман пункчĕ хăйĕн ĕç планне ăнăçлăн тултарса пырать. Вăрман хатĕрлес ĕçĕн мастерĕсем Иванов, Приезжев тата Данилова юлташсем ĕçе лайăх йĕркелесе ертсе пыраççĕ. Н. Тихонов, Н. Тихонов, Константинов, Павлов, Карпов тата Антонов юлташсем нормăна тăтăшах 150 процент тултараççĕ. Вĕсем уйăхсерен пин тенке яхăн ĕçлесе илеççĕ.

З. ТРОФИМОВ.

РАЙОН ЦЕНТРНЕ ИЛЕМЛЕТЕÇÇĔ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Район пентрĕнчи ĕççыннисем Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Халĕ вĕсем район центрне культурăллă сăн-сăпат кĕртме тытăнчĕç. Урам хушшине хăма сарса тротуар тăваççĕ, учрежденисем умне карта тытса çаврăнаççĕ. Çак ĕçсене рабочисемпе служащисем активлăн хутшăнаççĕ.

Кунсăр пуçне, район пентрĕнче Хрещен çурчĕ тăваççĕ. Ăна тума «Трактор», Шмидт ячĕпе тăракан колхозсем пулăшаççĕ. Вĕсем йывăç материалсем кӳчĕç тата платниксем уйăрса панă.

Çак кунсенчех район центрĕнчи сада илемлетме тытăнаççĕ. Сад йĕри-тавра вак чул сарса çул тăваççĕ.

В. АНДРЕЕВ.

ТАСС пĕлтерни

Юлашки вăхăтра Англире тухакан хăшпĕр хаçатсенче Польшăн политика деятелĕсем Польшăран «сухални» çинчен тĕрлĕрен халлап сараççĕ. Çав «сухални» поляксем çинчен кăçалхи майăн 2-мĕшĕнче Англири общинăсен палатинче ыйту пани. ыйтура 15 çыннăн хушаматне кăтартнă. Çавăн пекех тата Польшăн премьер-министрĕ пулнă Витоса та кăтартнă, ăна вара арестленĕ пулать. Общинăсен палатин çав ларăвĕнче поляксене Седлец хулинче вĕлерни тата персе пăрахни çинчен калакан хыпарсем пирки те ыйту панă.

Авторитетлă çынсенчен илнĕ сведенисем тăрăх, ТАСС çак сăмахсем пурте суя халлапсем пулни çинчен çнентерсе калама пултарать.

Чăннипе çапла пулнă:

«Акăлчансен пичетĕнче асăнакан тата Англири общинăсен палатинче кăтартса панă поляксен ушкăнĕ 15 çынтан мар, 16 çынтан тăрать. Çак ушкăн пуçĕнче поляксен палăнă генералĕ Окулицкий тăрать, анчах та вăл «сухални» çинчен акăлчансен информацийĕ юриех нимĕн те шарламасть, мĕншĕн тесен ку генерал «сухални» Англишĕн лайăх мар. Окулицкий генералăн ушкăнне, чи малтанах Окулицкий генерала хăйне, Хĕрлĕ Çăран тылĕнче диверсиллĕ ĕçсем тунăшăн айăпласçĕ. Çав диверсиллĕ ĕçсене пула, Хĕрлĕ Çăран боецĕсемпе офицерĕсем 100 çын ытла вилнĕ. Çав 16 çынтан тăракан ушкăн «сухалман», вĕсене Совет фроччĕн çар влаçĕсем арестленĕ, вĕсене халĕ Мускава илсе пынă. Çавнашкалах тата çав ушкăна Совет çарĕсен тылĕнче вăрттăн радиопередатчиксем тытса усранăшăн айăпласçĕ. Çав çынсене пурне те, е следстви кăтартнă тăрăх хăшпĕрисене, суда памалла. Англири информаци Седлец хулинче поляксене вĕлерни çинчен çарнă халлап, ун çинчен Англи парламентĕнче те ыйтнă пулнă, малтан пуçласа вĕçне çитиччен суя халлап, ăна Арцышевский агенчĕсем шухăшласа кăларнă пулмалла. Витоса арестлени çинчен пĕлтерни те суя».

Молотов юлташ Кайзер хулинчи карапсем тăвакан верфе пырса курнă

САН-ФРАНЦИСКО, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). В. М. Молотов юлташ Америкăн Мускаври посолĕпе Гарриманпа, Совет Союзĕн Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи посолĕпе Горемыкопа тата Совет Союзĕн ытти официальнăй çыннисемпе пĕрле Кайзер хулинчи карапсем тăвакан верфе пырса курнă. Çав пысăк верфь 1941 çулхи апрель уйăхĕнче ĕçлеме пуçласа, 700 карап ытла туса кăларнă. В. М. Молотов юлташ çав верфе виçĕ ĕçлет хушши пăхса çӳренĕ. Молотов юлташ суту-илӳ карапĕсене мĕнле туса кăларнипе тĕплĕн паллашнă.

УКРАИНАПА БЕЛОРУССИ РЕСПУБЛИКИСЕН ДЕЛЕГАЦИЙĔСЕМ САН-ФРАНЦИСКО ХУЛИНЕ ÇИТНĔ

САН-ФРАНЦИСКО, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Паян, кунти вăхăтпа 11 сехет те 00 минутра, Сан-Франциско хулине Украинăпа Белорусси республикисен делегацийĕсем çитрĕç. Делегацисене Манульскинне Киселев юлташсем ертсе пыраççĕ. «Гамильон Филд» ятлă çар аэродромĕнче делегацисене Молотов, Соболев, Новиков юлташсем тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государство департаменчĕн протокол отделĕн заведующийĕ Дрю хирĕç тухса кĕтсе илнĕ. Аэродромра хисеплĕ хурал тăнă.

ПĔРЛЕШНĔ НАЦИСЕН САН-ФРАНЦИСКĂРИ КОНФЕРЕНЦИЙĔНЧЕ

САН-ФРАНЦИСКО, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Америка делегацийĕ çумĕнчи пичет тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăй Байингтон пичет представителĕсене çапла каланă: ларура опека çине Англи мĕнле пăхни çинчен ăнлантарса паракан документсем тăратнă. Канашлура пулнисĕн акăлчансем тăратнă документа тĕплĕн вĕренме тата майăн 5-мĕшĕнче тепĕр хут тĕл пулма килĕшнĕ. Франци делегачĕсем Франци опека пирки Америка сĕннисене кăшт тӳрлетет пуль тесе каласа пачĕç, тенĕ.

МЭРРЕЙ СТЕТТИНИУС ПАТНЕ ЯНĂ ÇЫРУ

САН-ФРАНЦИСКО, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕн администраци комитечĕн председателĕ тата производствăлăлă профсоюзсен конгресĕн председателĕ Мэррей государство секретарĕ Стеттиниус патне çыру янă. Çав çырура вăл Сан-Францискăра тăвакан уставра экономикăллă тата социальнăй советăн ĕçĕсене пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен организацине хутшăнтармалли çинчен калама сĕннĕ. Çавăн пекех Мэррей тата пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен организацине генеральнăй ассамблейăпа хăрушсăрлăх советĕнчи представителĕсене канаш паракан сасăпа хутшăнма кирĕк пама ыйтнă.

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОФСОЮЗСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔН АДМИНИСТРАЦИ КОМИТЕЧĔ ЙЫШĂННИ

ПАРИЖ, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Франс пресс агентстви Сан-Францискăран пĕлтернĕ тăрăх, Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕн администраци комитечĕ майăн 3-мĕшĕнче çапла йышăннă: Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕн ертсе пыракан органĕсем ялан ĕçлесе тăракан вырăнĕ Париж пулмалла. Комитетăн виçĕмĕш канашлăвĕ пĕтнĕ. Делегатсем Сан-Францискăран майăн 5-мĕшĕнче тухса каяççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕн пĕрлехи тепĕр ларăвĕ сентябрĕн 25-мĕшĕнче Парижра пулать, унта 60 миллион ĕççынни суйласа янă представительсем пулаççĕ. Конференцине хатĕрленмешкĕн администраци комитечĕ сентябрĕн 19-мĕшĕнче пухăнать.

ХĔРЛĔ ÇАР БЕРЛИНА ИЛНĔ ЯТПА РУМЫНИРЕ ПУЛСА ИРТНĔ МИТИНГСЕМ

БУХАРЕСТ, майăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Бухарестри радио пĕлтернĕ тăрăх, совет çарĕсем Берлина илни çинчен калакан хыпар Румыни халăхне çав тери хаваслантарнă. Предприятисенче, фабрикăсемпе заводсенче митингсем пулса иртнĕ, çав митингсенче мухтавлă Хĕрлĕ Çара тата унăн палăлă полководецĕсене саламлă телеграммăсем яма йышăннă. Митингсенче çавăн пекех тата демократилĕ Румынин çарне, фашизма тĕпчипех пĕтерес тĕлĕшпе союзниксен çарĕсемпе пĕрле çуммăçуммăн тăрса кĕрешекенскере, салам яма йышăннă. Митинга хутшăннисем гăшмана хăвăртрах çĕнтермешкĕн фронта пулăшас тесе тата ытларах продукци туса кăларма обязательствăсем илнĕ.

Союзниксен Контроль Комиссийĕн çурчĕ умĕнче демонстраци пулса иртнĕ, демонстрантсем Берлина илнĕ Хĕрлĕ Çара саламланă.

Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне ăнăçлăн сарар

Пирĕн республикăри ĕççыннисем, Хĕрлĕ Çăран историллĕ çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, фронта тата ытларах пулăшас, Тăван çĕршывăн укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчи вăй-хăватне татах та ӳстерес тесе, Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне — нимĕç фашисчĕсене тĕпчипех пĕтерсе тăкмалли заема—хаваслăн çырăнаççĕ.

Çĕнĕ заем кăларасси çинчен Правительство пĕлтернине фабрикăсемпе заводсенче, учрежденисемпе организацисенче, колхозсемпе совхозсенче хаваслăн кĕтсе илчĕç.

Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне рабочисемпе служащисем 1½—2 уйăхри ĕç укçи чухлĕ çырăнаççĕ, чылай колхозниксем 2—5 пин тенкĕлĕх çырăнаççĕ те укçине те çийĕнчех тӳлесе татаççĕ.

Заем çырăннă чухне ĕççыннисем çапла калаççĕ: «Тăван çĕршывшăн, тăван Сталиншăн, тăшмана тĕпчипех арканса кăсснишĕн государствăна эпĕ хам перекетленĕ укçа-тенкĕне паратăп. Сывă пултăр Хĕрлĕ Çар! Сывă пултăр Сталин юлташ!»

Пĕр талăк хушшинчех пирĕн республикăри рабочисемпе служащисем заема 37.500.000 тенкĕлĕх çырăннă, колхозниксемпе единоличниксем—63.700.000 тенкĕлĕх çырăнса, 27.900.000 тенкĕ укçине тӳлесе татнă, колхозсем—10.400.000 тенкĕлĕх çырăннă.

Çĕнĕ заем кăларасси çинчен пĕлтернĕ кунах заем сарасси Шупашкарта, Канашра, Улатăрпа Çĕмĕрлери хăшпĕр предприятисенче питĕ активлăн пулса пычĕ. Майăн 4-мĕшĕнче çĕрле 12 сехет тĕлне Шупашкарпа Канашри ĕççыннисем, пĕтĕмĕшпе илсен, заема çырăнса пĕтернĕ тесе шутлама пулать. Нумай предприятисемпе учрежденисен коллективĕсем ĕç укçи фончĕн 150—180 процентĕ чухлĕ çырăннă. Тĕслĕхрен, Чăлха фабрикинчи коллективра уйăхри ĕç укçин 171 процентĕ чухлĕ, Табак фабрикин коллективĕнче—165 процент, «Пекарь» артельре—182 процент, Нефтебаза коллективĕнче—137.9 процент чухлĕ сарнă. Шупашкартри, Канашри, Çĕмĕрлери, Улатăртри ытти предприятисенче те çĕнĕ заем ăнăçлăн сарăлать.

Шупашкартри килхуçи хĕрарăмĕсем те çĕнĕ заема сарас ĕçе активлăн хутшăнчĕç. Тĕслĕхрен, Ленинград урамĕнчи урам комитечĕн председателĕ Смирнова юлташ, фронтовиксен амăшĕ, пенси илсе пурăнаканскер, хăйĕн урамĕнчи килхуçи хĕрарăмĕсем хушшинче 5.600 тенкĕлĕх сарнă, вăл хăй 500 тенкĕлĕх çырăнса укçине çийĕнчех перекет кассине леçсе панă. Чувашски урамри Яблочко юлташ 23.700 тенкĕлĕх сарса перекет кассине 4.400 тенкĕ пухса панă. Коммунальная Слобода урамĕнчи Шепелева юлташ килхуçи хĕрарăмĕсем хушшинче 875 тенкĕлĕх сарса укçине çийĕнчех пухса перекет кассине панă. Çавăн пекех тата Киронова, Мальчикова юлташсем те заема ăнăçлăн сараççĕ.

Шупашкар хулинчи колхозсенчи колхозниксем малтанхи кунах 186.000 тенкĕлĕх çырăнса укçине çийĕнчех тӳлесе татнă.

Çĕнĕ заема Улатăр хулинчи, Элĕкри, Ишлейри, Шупашкар, Чурачăк, Елчĕк районĕсенчи рабочисемпе служащисем хушшинче сарса пĕтереймен-ха. Улатăр хулинчи тата асăннă районсенчи руководительсемпе комсомодсен задачи—çырăх вăхăтрах рабочисемпе служащисем хушшинче заема сарса пĕтересси тата заем тытăкансене перекет кассисем урăх тĕрлĕ пулăшу парасси пулса тăрать.

Колхозниксемпе единоличниксем хушшинче заем сарасси Вăрнар, Калинино, Красноармейски, Муркаш, Октябрьски, Сĕнтĕр, Вăрмар, Чурачăк тата Шăхасан районĕсенче ăнăçлă пырать.

Анчах çакна та асăрхаттармалла: нумай районсенчи руководительсем Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне сарма хатĕрленес тĕлĕшпе те, тата халĕ сарнă вăхăтра та çителĕклĕ ĕçлемеççĕ. Вĕсем заем çинчен ăнлантарса парассине кирлĕ пек организацилемеç, хăйсен активне пĕлсе вырнаçтарса тухман. Çавăн пирки те ĕнтĕ çав районсем заема сарас тĕлĕшпе те, заемшăн укçа пухас тĕлĕшпе те кая юлса пыраççĕ. Сăмахран, Первомайски районра колхозниксем хушшинче 1.015.000 тенкĕлĕх сарнă, анчах укçине 89.000 тенкĕ кăна пухнă. Паллах, кунта заем сарас ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен. Элĕк районĕнче колхозниксемпе единоличниксем тата колхозсем хушшинче 2.930.000 тенкĕлĕх сарнă, укçине 310.000 тенкĕ кăна пухнă. Етĕрне районĕнче 2.650.000 тенкĕлĕх сарнă, укçине 480 000 тенкĕ кăна пухнă.

Хăшпĕр районсенче районри финанс пайĕпе перекет кассисенче ĕçлекенсем, районри ытти работниксем тĕрĕс мар çул çине тăраççĕ. Вĕсем çапла калаççĕ: «Укçине пухма ĕлкĕрĕпĕр-ха, халь заемне сарачĕ те, сарса пĕтерни çинчен пĕлтересчĕ», теççĕ.

Çакăн пек калакансем йăнăш тăваççĕ. Чăннипе, заема сарасси те, укçине пухасси те пĕр вăхăтрах пулса пымалла.

Заема колхозсем хушшинче сарассине те манмалла мар. Сăмахран, Улатăр районĕнче колхозсем хушшинче бюджетпа палăртнинчен 14,4 процент, Куславкка районĕнче—47 процент, Сĕнтĕр районĕнче — 59,1 процент, Тăвай районĕнче — 60 процент сарнă. Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне колхозниксемпе единоличниксем хушшинче те, колхозсем хушшинче те çитес кунсенчех сарса пĕтермелле.

Заем укçин 25 процентĕ район бюджетĕнчех юлать. Çавăнпа та район бюджечĕн тупăш пайне тултарасси, çапла вара бюджет тăрăх палăртнă мероприятисене вăхăтра укçа-тенкĕ парса тăрасси те заема мĕнле сарнинчен тата уншăн укçа мĕнле пухса пынинчен килет. Районри работниксен çакна яланах асра тытмалла.

Заем сарас тĕлĕшпе малтан пулнă çитменлĕхсене халех пĕтермелле. Колхозсенче заем илмелли документсене тĕрĕс çырса пырасси тата вĕсене сыхласа усрасси тĕп задачăсенчен пĕри пулса тăрать. Пртнĕ çул хăшпĕр колхозсенче заем çырăнса илнин хучĕсене çухатса пĕтернĕ те вара кайран кама мĕн чухлĕ облигаци памалline те пĕлмен. Кăçал ун пек çитменлĕхсем пулмалла мар.

Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне пур рабочисемпе работницăсен, мĕнпур интеллигенцин, колхозниксемпе колхозницăсен, мĕнпур служащисен, аластаççен, пенсионерсен, кăлхуçи хĕрарăмĕсен, вăтам тата аслă шкулсенче вĕренекенсен, мĕнпур ĕççыннисен çырăнса илмелле. Çакă ĕнтĕ халĕ кашни çынăн патриотла тивĕçĕ пулса тăрать.

И. ЗОЛОТНИКОВ.

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЭЙЗЕНХАУЭР НИМĔÇ ÇАРĔСЕН КĂНТĂР ГРУППИРОВКИ ПАРАННИ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, майăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Эйзенхауэр генерал паян каçхине пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă. Пĕлтерӳре çапла каланă: «Хĕвеланăç фронтĕнче Германи çарĕсем йĕркеренех тухса арканса пыраççĕ. Кăнтăрти флангра нимĕçсен Шульц генерал командир пулса ертсе пыракан армн группировки, 1-мĕш армине 19-мĕш армирен тараканскер, паян кăнтăрла иртнĕ Дезере генерала парăннă».

ЛОНДОН, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Çурçĕр Австрире союзниксен çарĕсем Дунай çинче ларакан Линц хулине пырса кĕнĕ.

Чехословакире союзниксен çарĕсем çар промышленноçĕн пысăк центрĕ пулса тăракан Пльзень хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре вырнакан района çитсе кĕнĕ.

Альп тăвĕсен вăрринче союзниксен çарĕсем нимĕçсен вăрттăн лагерьне йышăннă. Союзниксен çарĕсем ку лагерьте Франци премьер-министрĕсем пулнă Эдуард Даладьене тата Поль Рейнона, çавăн пекех Гамеленпа Бейген генералсене ирĕке кăларнă. Австри канцлерĕ пулнă Шушнинга тата Франци премьер-министрĕ пулнă Леон Блюма союзниксен çарĕсем лагере пырса çитиччен темиçе сехет малăрах нимĕçсем урăх çĕре илсе кайма ĕлкĕрнĕ.

Майăн 4-мĕшĕнче союзниксен çарĕсем Хĕвеланăçĕнче 176.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

ЛОНДОН, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр типĕс таврашĕнчи хĕç-пăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: 8-мĕш армн чаçĕсем Кăнтăр Австрире Филлах хули патнелле куçса пыраççĕ. Çулсемпе кĕперсене пăсса пĕтернĕ пирки малалла куçса пыма йывăр пулнă. 5-мĕш армн çарĕсем Австри çĕрне Резня тата до Бианко ятлă ту хушшисемпе кĕрсе кайнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 1—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31. 3—99, издательство конторин — 0—23.

НТ 00338

Типографи № 1 Управл полиграф. ышленности при СНК ЧАС. Заказ № 2. ж 16.000